Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕслетпĕр

Хуçалăхсенчи техникăна Муркашран пырса юсамаççĕ

Шурă юрĕ çурĕ-çурĕ,
Таврана шап-шурă турĕ.
Хĕл те ларчĕ темелле,
Çур акине кĕтмелле...

Статья умне кăларнă сăвă илемлĕ вуланать, анчах... Кĕрхи уй-хир ĕçĕсем пĕркуннех вĕçленнĕ пулсан та, паян парксенче таса мар пичĕсене çумсем хыçне пытарнă техника патне çывăха пырса пăхсан вĕсем уйăх е çур çул каялла çĕр ĕçченĕн аллинчех пулни, вĕсемшĕн хуçалăхсенче яваплă çынсем пурри те иккĕленӳллĕ.

"Кашни ĕçĕн вăхăчĕ пур", – тет ĕç тĕлне пĕлекен çын. Çапла калать те умри ĕçсене кая хăвармасăр пурнăçлама мĕн-пур хăвата пуçтарать. Хыçа юлакан ял хуçалăх çулĕ те кăçал хресченĕн тăрăшулăхне çивĕч тĕрĕслерĕ: çĕр ĕçĕпе пурăнаканăн нумай ĕçсене çумăрлă çанталăкпа кĕрешсе пурнăçлама тиврĕ. Тимлĕ та малалла пăхса ĕçлекенсем "çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен" тенине çиеле каларчĕç. Хĕле кĕнĕ май çав хуçалăхсенче пулса куратăн та кăçал йĕпе-сапаллă çу-кĕр кунĕсем пулнине асăрхаймастăн та.

А. Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ урлă пăхсан (килĕшмелле, вĕсем пĕр вырăнта вырнаçнăскерсем мар пулин те, пĕр климат условийĕсенче), хăшĕсем чăнласах малашлăхпа ĕçлени пирки иккĕленӳ çуралать. Вăйлă тесе калакан хуçалăхсем техникăна упраса унăн ĕмĕрне тăсса укçа-тенкĕ перекетлесси, кунпа пĕрлех производствăна аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Хăйсене "хыçалтисем" тенипе килĕшменнисем вара ыттисем пекех çичĕ хут тар юхтарса тăвакан укçа-тенкĕне çĕртеççĕ-тутăхтараççĕ, шывпа юхтараççĕ.

Хуçалăхсем техникăна хĕллехи управа лартнине пĕрремĕш кун тĕрĕслеместпĕр. Çак ĕç ответлăхне туякансем çанă тавăрса ĕçлени те курăнать. Анчах ... Çак "анчах" район сăнне ӳкерет те. Ноябрĕн 10-мĕшĕнче ирттернĕ рейдра маларах асăннă хуçалăхсенче пулса куртăмăр та хăшĕсем хирсем шурă кавирпе витĕннине пăхмасăрах хĕл çывхарни пирки, хыççăн çур аки те çитни, çак ответлă ĕç тапхăрне 30 градуслă сивĕре метр çурă хулăнăш юр айĕнчен техника кăларса юсама май çукки çинчен шутламанни "Ударник", Ильич яч. хис. хуçалăхсенче пулса управа лартнă техникăна пăхсан, кăçал çумăрлă та пылчăклă условисенче ĕçлеме тӳр килчĕ тесе калаймăн та. Парк территорийĕнче юр тытакан çум таврашĕ те курăнман Шурчара, техникăн тĕп пайĕ хĕç-тимĕрпе те шиферпа çавăрса-витсе хунă гальăх-чĕрлĕх ĕрчетет. Çĕнĕ хуçалăх фермисем аталаннине ырламалла кăна, анчах Шетмĕпуçĕнчи çĕнĕ урам патĕнчи хирте çĕртме сухи тунă хыççăн уй варринчех ларса юлнă плуг... Суха туни лайăх-ха та, анчах суха агрегатне хире пăрахса хăварни малтуртăмлă утăм марри пирки те иккĕленӳ çук. ларaççĕ. Пулать вĕт-ха ĕçлесен!

К. Иванов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче ĕçе явăçтарнă техника хире юлман. Вĕсене управа лартма парк территорине тимĕр-тăмăртан самай тасатнă, анчах ял хуçалăх техникине ГОСТпа килĕшӳллĕн управа лартассипе ĕçлениех купейлĕ ларниех хуçалăх техникăна упрасси çине тимлĕх уйăрни пирки калать.

Çав вăхăтрах пĕтĕм "хир карапне" уйран мĕнле килнĕ çапла гаражсене управа лартнă Чапаев яч. хис. хуçалăхра гаражра вырăн тупайман СК-5 "Нива" комбайн пĕчченех юр-çумăрпа кĕрешет: хăйĕн чӳречи хупăнман, двигатель "уçă", хӳтĕленме юнашар кустăрма çуллĕш çум. Çĕрет хаклă техника, çĕрет!!!

Ильич яч. хис. хуçалăхăн управри комбайнĕсем ăмсантараççĕ.

А. Михайловпа А. Федоров «хир карапне» сивве пăхмасăр управа лартаççĕ (А. Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ).

К. Иванов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче.

Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри «хуçасăр» комбайнсем.

«Хиртех хĕл каçас-ши?»- тет Шетмĕпуç патĕнчи уйри плуг суха вĕçленĕ май.

Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра пулса курсан, кунти пуянсем техникăна упрассипе мар, юхăнтарассипе çанă тавăрнă курăнать. Списать туман "хир карапĕсен" пĕр ушкăнĕ "гаражран тухса кайнă та асфальт çине çитеймен". Ĕçре пулнă комбайнсем вара тасалăх-тирпейлĕх çинчен манса йĕтем айĕнче ларaççĕ. Вĕсен умĕнче тăршшĕпех "тырă отхочĕ" калчаланнă. Çакăнта-ши вĕсен вырăнĕ? Мехпаркра кăçал туяннă БДМ-4х4 агрегат пылчăкран тасалмасăр ларни Муркашсем районти çĕнĕ йышши çак пĕртен-пĕр агрегата тивĕçлĕ упрама хыпаланманни çинчен калать: е-е-й, мĕн вăл 400 пин тенкĕ! Инçетрех те мар ĕçре ывăннă плуг хăяккăн выртни те паркра техника управĕ ГОСТ ыйтнине тивĕçтерменни пирки калать.

Вăл çук та ку хаклă, ăна тума йывăр та кăна пурнăçлама çăмăл мар, инфляци çиет, тетпĕр, анчах ĕçлемесĕр ĕç пулнине никамăн та ĕненес килмест. Çапла вĕт?

С. НИКОЛАЕВ, патшалăх техника надзорĕн районти инженер-инспекторĕ;
А. БЕЛОВ, район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.

Теприсен вара...

Маларах каланине уй-хир ĕçĕсене хутшăннă ял хуçлăх техникине хĕллехи управа лартнипе лартманни те уçăмлă çирĕплетет. Производство кооперативĕсенче пулса кун тĕлĕшпе тĕрлĕ ӳкерчĕк курни хăшĕсем техника çине пачах та алă сулнине кăтартать. Вĕсем çитес çул унта ĕçлес темеççĕши е ăна-кăна туянма укçа çук текенскерсем хăйсем "пуян" пулнине тата кирек-хăш техникăна та ялан илме пултарнине кăтартасшăн-ши? Çак ыйтун хуравĕ çине "Герой", "Свобода", К. Иванов яч. хис., «Ударник», Ильич. яч. хис., Чкалов яч. хис., Чапаев яч. хис., Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсем тата курăнчĕ. Хиртен тухайман, парка çитсен те пĕр рете ларайман, пылчăкран тасалайман, симĕс калчапа витĕннĕ, тырăран пушанайман техника вара Раççей Президенчĕ В. Путин кун çути панă наци проекчĕпе, Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров ялсене çĕклеме кăларакан йышăнусемпе "кĕрешсе" хамăр япăх пурăннине çирĕплетеççĕ. Сывă пултăр...! Юхăнать-тăк юхăнтăр", – тесе çирĕплетеççĕ пулас хăйсем çинчи ответлăха сирсе тата хăйсем мĕншĕн ĕç укçи илнине манса хăш-пĕр "специалистсем".

Пĕр условисенчех пурăнатпăр пулин те, малтуртăмпа ĕçлекен "Герой", "Свобода", "Ударник", Ильич яч. хис. хуçалăхсенче пулса управа лартнă техникăна пăхсан, кăçал çумăрлă та пылчăклă условисенче ĕçлеме тӳр килчĕ тесе калаймăн та. Парк территорийĕнче юр тытакан çум таврашĕ те курăнман Шурчара, техникăн тĕп пайĕ хĕç-тимĕрпе те шиферпа çавăрса-витсе хунă гальăх-чĕрлĕх ĕрчетет. Çĕнĕ хуçалăх фермисем аталаннине ырламалла кăна, анчах Шетмĕпуçĕнчи çĕнĕ урам патĕнчи хирте çĕртме сухи тунă хыççăн уй варринчех ларса юлнă плуг... Суха туни лайăх-ха та, анчах суха агрегатне хире пăрахса хăварни малтуртăмлă утăм марри пирки те иккĕленӳ çук.

Унченрех Мичурин ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство вырăнĕнче паян А. Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ тыр-пул ӳстерет, выражсенче упранакан Кашмашра, уйăх каялла ĕçре пулнă техникăна çуса тасатса ураписене шуратса тата ĕç пайĕсене управа лартнă Вăрманкасра ("Ударник"), управ ретне манăça кăлармасăр тытса пыракан Уйкас Янасалта çитес çулхи уй-хир ĕçĕсем те уксахлас çуккине паянах ăнланма пулать. "Сĕршыв ĕçлекене пулăшать. Çак пулăшупа туллин усă курма çывăрмаллла мар", – тет Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров. Анчах хулăн ӳтлисем çакна илтмеççĕ...

Паркра пĕр рете управа вырнаçтарнă сеялкăри пăрçа вăрлăхĕ хĕл çитнине кăкăр çапсах хирĕçлет: "Çур аки-çке хирте, анчах акаран кĕтĕм". Кăçалхи вырмана хутшăннă 3 "хир карапĕнчен" пĕр СК-5 "Нива" "юр çийĕнех вырмана каясшăн" ĕçе хатĕр ларать. "Волга-2" агрегат патне те, БДТсем патне те управçă алли çитеймен, вĕсем çинчен хирти тусан та кайман. Ялăххи ялăххипе те, анчах Шетмĕпуçĕнчи машинăпа трактор паркĕнчех ыррине те тĕл пултăмăр: Алексей Михайлов, Владимирпа Андрей Федоровсем (ашшĕпе ывăлĕ) хăйсем ĕçленĕ "хир карапĕсене" çуса тасатнă та управа лартса пĕтереççине юлашки ĕçсем пурнăçрăнмасть. Техника çумăр шывĕсĕр пуçне шыв курманни те суя сăмах мар. Кунпа пĕрлех культиваторсемпе сеялкăсем, плугсемпе сажалкăсем управа пĕр çĕре пухăнманни те паркра асфальт лаптăксемпе тулли усă курманни çинчен калать. Хуçалăхăн тĕп инженерĕ Л. Порфирьев техникăна управа лартма тепĕр эрне ыйтни кая юлнă утăм мар-ши? Урамра çил-тăман çĕкленет.

"Ударникра" хуçалăхăн Панкли уйрăмĕнче техникăна ГОСТпа килĕшӳллĕ управа лартса пĕтермелли хăш-пĕр ĕçсем пур пулсан та, Йӳçкассипе Вăрманкассинче пĕр шăйрăк та çук.

Ильич яч. хис. хуçалăхри икĕ "Енисей" комбайн управра тирпейлĕ ларниех хуçалăх техникăна упрасси çине тимлĕх уйăрни пирки калать.

Çав вăхăтрах пĕтĕм "хир карапне" уйран мĕнле килнĕ çапла гаражсене управа лартнă Чапаев яч. хис. хуçалăхра гаражра вырăн тупайман СК-5 "Нива" комбайн пĕчченех юр-çумăрпа кĕрешет: хăйĕн чӳречи хупăнман, двигатель "уçă", хӳтĕленме юнашар кустăрма çуллĕш çум. Çĕрет хаклă техника, çĕрет!!!

Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра пулса курсан, кунти пуянсем техникăна упрассипе мар, юхăнтарассипе çанă тавăрнă курăнать. Списать туман "хир карапĕсен" пĕр ушкăнĕ "гаражран тухса кайнă та асфальт çине çитеймен". Ĕçре пулнă комбайнсем вара тасалăх-тирпейлĕх çинчен манса йĕтем айĕнче ларaççĕ. Вĕсен умĕнче тăршшĕпех "тырă отхочĕ" калчаланнă. Çакăнта-ши вĕсен вырăнĕ? Мехпаркра кăçал туяннă БДМ-4х4 агрегат пылчăкран тасалмасăр ларни Муркашсем районти çĕнĕ йышши çак пĕртен-пĕр агрегата тивĕçлĕ упрама хыпаланманни çинчен калать: е-е-й, мĕн вăл 400 пин тенкĕ! Инçетрех те мар ĕçре ывăннă плуг хăяккăн выртни те паркра техника управĕ ГОСТ ыйтнине тивĕçтерменни пирки калать.

Вăл çук та ку хаклă, ăна тума йывăр та кăна пурнăçлама çăмăл мар, инфляци çиет, тетпĕр, анчах ĕçлемесĕр ĕç пулнине никамăн та ĕненес килмест. Çапла вĕт?

С. НИКОЛАЕВ, патшалăх техника надзорĕн районти инженер-инспекторĕ;
А. БЕЛОВ, район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.

Куçма Пайраш çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май

Пултаруллă врач, ăста çыравçă

Чăвашсен паллă çыравçи Кузьма Ильич Пайраш (Садиков 14.11.1906 ç. -13.02.1974 ç.) пирĕн районти Акуча тăрăхĕнчи Вускассинче çуралса ӳснĕ. Çӳлтикассинчи тулли мар вăтам шкула, Шупашкарти совпартшкула, Мускаври Н.И. Пирогов ячĕллĕ 1-мĕш медицина институтне вĕренсе пĕтернĕ. 1933-1936 çулсенче Мăн Сĕнтĕр сыватăшĕнче ĕçленĕ, çав вăхăтрах райĕçтăвкомăн сывлăха сыхлас ĕç пайĕн ертӳçи те пулнă. 1936-1941 çулсенче Шупашкарти 1-мĕш хула сыватăшĕн хирургĕ тата рентгенологĕ пулнă, 1953-1974 çулсенче республика сыватăшĕн урологи уйрăмне ертсе пынă.

Вăрçă вăхăтĕнче К.И. Садиков капитан Инçет Хĕвел тухăçĕнчи куçса çӳрекен госпитале ертсе пынă, 1945 çулта 2-мĕш фронтра Япони çарне аркатнă çĕре хутшăннă.

Çартан таврăнсан, 1946-1953 çулсенче, республикăри МВД-КГБ тытăмĕн сыватăшĕнче ĕçленĕ. Хăй вăхăтĕнче Куçма Пайраш Чăваш енре чи паллă тухтăр шутланнă. Вăл "Тава тивĕçлĕ врач" ятне (1964), Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне (1971) тата ытти наградăсене тивĕçнĕ.

Çав вăхăтрах Кузьма Ильич тăван сăмахлăхпа та кăсăкланнă, сумлă çыравçă пулнă. Вăл – нумай кĕнеке, куçарупа рецензи, ытти публикацисен авторĕ. 18 çулта чухнех ăна, хĕрӳ чĕреллĕ ялкора, пултарулăхне кура, "Канаш" халь "Хыпар" хаçат редакцине ĕçлеме чĕнсе илнĕ.

1920 çулсенче хаçатсенче фельетонсемпе очерксем пичетленипе пĕрлех пулас литератор калавсемпе пьесăсем çырма тытăннă. "Сунтал", кайран "Ялав" журналăн пĕр номерĕнче харăсах икĕ шӳтлĕ калавĕ пичетленсе тухнă. Кĕçех вулакансем унăн "Наçтук" калавĕпе, "Телейсĕр кунсем" пьесипе паллашнă.

Медицина институтĕнчен вĕренсе таврăннă хыççăн Кузьма Ильич халăх сывлăхне сыхлас ĕçе туса пынипе пĕрлех илемлĕ хайлавсем ытларах çыра пуçланă. "Сунтал" журналпа "Трактор" альманахра, кайран "Тăван Атăл" çамрăк çыравçăн интеллигенцийĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă калавĕсем умлăн-хыçлăн пичетленсе тухнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче çар чаçĕсенче салтаксене сыватнă чух тата каярахпа çырнă калавĕсенче К. Пайраш çарпа патриотизм темине уйрăмах мала хунă: "Пуçламăшĕ", "Тĕл пулу", "Катерина Ларина", "Партбилет", "Киле таврăнсан" тата ыттисем те.

Халăх сывлăхне сыхлакансен ĕçĕ çинчен çырнă калавсен шутне Кузьма Ильичăн "Чăх куç", "Дежурствăра", "Çĕлен наркăмăшĕ", "Киле таврăнсан", "Арçынсем анчах айăплă-ши?" тата ыт. те кĕртме пулать.

Çынсен хутшăнăвĕсен тĕрлĕ енне тимленĕ К. Пайраш, тусюлташлăх, килĕшӳ-юрату темине те самаях хускатнă. Вăл сăнлакан туслăхпа юрату яланах таса, çутă, вулакансене чуна парса кĕрешме, çанă тавăрса ĕçлеме хавхалантарать.

Е. ЕРАГИН.

Кашни яла – асфальт çул

Такăр пултăр Юрпаш çулĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Юрпаш пысăках мар 43 киллĕ, 135 çынлă, 2 тарăн çырмаллă ял. Аслă Отечественнăй вăрçа 53-ĕн кайнă, 21-шĕ Тăван çĕршыва хӳтĕлесе пуçĕсене хунă.

Ял кунне халалланă уяв программи анлă та интереслĕ иртрĕ. Пухăннисене Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ И.В. Николаев ăшшăн саламларĕ. Хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ.

– Чăнах та, эпир çакăн пек çул пирки, паллах, ĕмĕтленнĕ, анчах кĕтсе илессе шанма пултарайман. Пирĕн шанчăка кĕске вăхăтра ĕçпе тӳрре кăларнăшăн манăн чи малтан район администрацийĕн пуçлăхне Юрий Александровича пысăк тав сăмахĕ калас килет. Хуçалăх ĕçченĕсен вара çакна ĕç кăтартăвĕсене татах та ӳстерсе çирĕплетмелле. Пирĕн хуçалăх ӳсĕмсĕр ĕçлет тесе калас килмест. Çакна ял халăхĕ тăрăшса ĕçленине кăтартăвĕсенчен те курма пулать. Кăçал уйрăмах çĕр улми тухăçĕ савăнтарчĕ. Ĕç укçи те пирĕн пысăккисен шутĕнче.

Юрпаш ялĕ хисеплĕ, пултаруллă çынсемпе пуян. И.В. Михеев ял тăрăхĕн депутачĕ, ятлăсумлă ветеран, тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те, ялти йĕркелĕхшĕн нумай тăрăшать. Çул тăвас ĕçре те унăн тӳпи пысăк. Вĕсен кил-çурчĕ тирпей-илемпе палăрать. Çакна ял тăрăхĕн пуçлăхĕ "Чи тирпейлĕ хуçалăх" ята çирĕплетекен панă Хисеп грамоти тата асăнмалăх пысăк парне те çавăн пиркиех калать. Апла пулсан ыттисен тĕслĕх илмелли пурах унтан.

Улми йывăççинчен аякка ӳкмест, теççĕ халăхра. Çакă паянхи тĕслĕхре те палăрчĕ. Унăн ывăлĕ Юрий Игоревич та ашшĕн ырă ĕçĕсене тĕпе хурса пурнăçлать. Яла тирпей-илем кĕртес ĕçре пуçарулăхпа палăрнăшăн Хисеп грамотине тивĕçрĕ.

Юрпаш ялĕнчи чи аслă çын 1925 çулта çуралнă Всеволод Иванович Иванов. Унăн хăрушă вăрçă асар-писерне курма тӳр килнĕ. Ăна ялти аслă арçын тесе асăнмалăх парне парса чыс турĕç. Çавăн пекех ялти чи аслă çулхи хĕрарăма, чи кĕçĕн хĕр ачана тата кĕçĕн арçын ачана парнесемпе хисеплерĕç.

Сосновка шкулĕнчи ачасем О.А. Максимов йĕркеленипе спорт тусĕсем çĕнĕ çулăн чăтăмлăхне тĕрĕслерĕç. Пылчăка пăхмасăр вĕсем активлăхпа палăрчĕç. Ял тăрăхĕн специалисчĕ А.И. Булавкина парнесем пачĕ.

Уяв вăл юрă-ташăсăр иртмест. Кунта та ял халăхне хавхалантарма шкул ачисем, В.Н. Ипатьева вĕрентекен хатĕрленипе, сăвăсем каларĕç, юрларĕç. Татьяна Зиновьевнăпа Леонид Васильевич Степановсем йĕркеленипе çамрăк инкесемпе пиччесем лартса панă концерт та уяв кунне хаваслатрĕ, ял халăхне ташша чĕнчĕ.

Уяв кунĕ, паллах, спонсорсемсĕр иртмест. Ăна ирттерме Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи И.В. Николаев, В.П. Михайлов тата О.Б. Николаев предпринимательсем пулăшу пачĕç. Олег Борисович тăрăшуллă 10 ял ĕçченне уяв самантне йĕркелеме хутшăннăшăн эстрада çăлтăрĕсен концертне кайма 10 билет парнелерĕ.

Çак уяв питĕ интереслĕ самантпа палăрчĕ. Уйкас Янасал тăрăхĕсем асатте-асаннесен йăли-йĕркине манмаççĕ. Енчен те эпир хура тăла çинчен çăпата сырнă, шурă сăхман тăхăннă, авалхи саламат тата кушел çакнă çĕр ĕçченне Шупашкарти музейра çеç курма пултаратпăр пулсан, паян вара унта çити каймалла та мар. Уяв кунне юрă-ташăпа илемлетекенсем те çак тăрăхри чăваш тумĕллĕ инкесем çав тери илĕртӳллĕ курăнчĕç. Апла пулсан аваллăха манăça кăлармаççĕ-ха Никольский тăрăхĕсем. Ĕçлеме те, канма та, йăла-йĕркесене те упрама пĕлет ял халăхĕ!

Р. ИЛЛАРИОНОВА.